# Ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан

**Çут çанталăкпа туслисем – çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх**

## Ешертĕр тавралăх, ӳстĕр çырла

Çĕр çине хăнана килекен çынран çут çанталăк кĕске хушăрах пӳрт-çурт çавăрнипе пĕрлех ача çуратса ӳстерме тата йывăç лартса хăварма ыйтать. Пурнăç тĕллевне çакăнта курса ăна талăка пуянлатасси пирки мар, унăн пуянлăхĕпе ытлăçитлĕ усă курса юласси пирки ытларах пуç ватать. Çут çанталăк чăтать, теççĕ-ши? Çапла, чăтать, анчах вăл чăтăмлăхăн та виçи пур. Шайлатпăр пулин те, вăрмансем сайрални унти тискер чĕрчунсемпе кайăккĕшĕксем пирĕн тăрăхран сивĕнесси патне çитерет. Кунпа пĕрлех таса сывлăшра кану ирттересси манăçа тухса пырать. Çут çанталăка сыхласси кашни çын тивĕçĕ тени Президент хушăвĕпе пурнăçламалли ĕçе çаврăнать. Çапла вара пысăк шайри указсем хыççăн çеç çырмана йывăç лартма анатпăр, шывпа çил эрозийĕпе кĕрешме тухатпăр, çырмара пулăсем ĕрчетесси пирки шутлатпăр. Ку вара куллен пурнăçламалли ĕç, – хăйĕн чун пăшăрханăвне уçса калаçрĕ Зинаида Егоровна. Чăр-чăр вылякан кусĕсемпе сăн-питĕнчен вара кинемей хăйĕн ĕçĕпе тулли кăмăллă пулни курăнать. Калаçу çăмхине майĕпен малалла сӳтнĕ май çĕнĕ пĕлĕшĕмĕн кăмăл-туйăмĕ урăхла пулмасса ĕненсе те ĕненсе пытăм. Чăваш хĕрарăмĕ çавăн пек маттур пулнишĕн савăнтăм, мăнаçлантăм.



пурнăçланă çын çеç çулсем иртнĕ хыççăн пуçне çӳле çĕклесе хăй ĕмĕрне усăллă ирттертĕм тесе калайрать. Пурнăçăн çак тĕрĕслĕхĕ Тури Кăпасра çуралса ӳснĕ, Кĕçĕн Кăпаса качча тухса çемье çавăрнă Зинаида Егоровна Ягунова пиркиех. Çак кинемейпе тĕл пулса калаçсан пирĕн хушăмăрта çут çанталăка калама çук юратакан çынсем те пурри куç умне тухрĕ. Сăмах май, пирĕнтен чылайăшĕ çут çанлашу çухалнăранах-тăр юлашки çулсенче унта та кунта çут çанталăк инкекĕсем кун йĕркине тухни курăнать-палăрать.

– Çут çанталăка юратсан, вăл та санран пăрăнмасть. Çакна пурте курса-пĕлсе тăратпăр пулин те, тивĕçлĕ ĕçсем çине алă сулнипе ялсем тавра пĕвесем куçран çухалчĕç, çуллахи шăрăхра ачасем шыва кĕресси ыйтусен ыйтăвĕ пулса тăчĕ. Таса сывлăш кирлĕ тесе сăмахлатпăр пулин те, вăрмансем сайрални унти тискер чĕрчунсемпе кайăккĕшĕксем пирĕн тăрăхран сивĕнесси патне çитерет.

Анчахрах 73 çул тултарнă Зинаида Егоровна пурнăçра тасçта та ĕçлесе курнă, анчах вăл хăйне самантлăха та çут çанталăк ытамĕнчен уйăрса яман, уншăн яваплăха çухатман. Паян кунччен вăл тăван тавралăха илемлетессишĕн, унăн пуянлăхне ӳстерессишĕн вăй çитнĕ таран тăрăшать, ыттисене те çак ĕçе явăçтарса çулленех йывăçсем лартать, ачапăча валли тесе вăрманлă вырăнсенче çырласем ĕрчетет.

– Вăрман лартасси – пирĕн ăруран ăрăва куçакан ĕç. Манăн маçак Мирон хăй вăхăтĕнче вăрман лартассипе нумай ĕçленĕ: вăрман лартнă, юман хăвăлĕсенчен тунă вĕллесенче хурт-хăмăр ĕрчетнĕ, кашни ачине вĕллесем парнеленĕ те çав вĕллесем паянччченех ăруран ăрăва куçса пыраççĕ. Асатте ĕçне шута хурса паянхи Хурал çаран вăрманне ĕлĕкрех Мирон вăрманĕ тенĕ, – хăйсен ăрăвĕнче вăрман лартас ĕç ăçтан пуçланнине хăй тĕплĕ пĕлнине кăтартса калаçать Зинаида Егоровна.

Хăй несĕлне пĕлекен çын чăн-чăн ÇЫН тенипе килĕшсен тата З. Ягунова пурнăçланă ĕçĕсемпе тĕплĕнрех паллашсан, хамăн çĕнĕ пĕлĕшĕм çинчен ырă шухăшсем кăна вăй илчĕç. Çын хăй пурнăçĕнче çут çанталăкшăн çавăн чухлĕ ĕç тунине пĕлсен, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм те.

Зинаида Егоровна 20 çул хушшинче 5 гектар ытла вăрман лартнă. "Пĕччен мар, паллах",– тет вăл хăйĕн сăпайлăхне пытарма тăрăшса.

1984 çулта "Новая Юнга" колхоз председателĕ А. Васюхин ыйтнипе Зинаида Ягунова Ирина Илларионова учительницăпа вăрман лартма пуçлаççĕ. Хастар хĕрарăмсене Мăн Сĕнтĕр лесничествин лесничийĕ самай пулăшать. Тракторпа лартнă йывăççем пурте чĕрĕлменрен малашлăхлă ĕçе пуçаракансем ку вырăнта вăрман тăвасах тесе шутлаççĕ. Шутланă – тунă. Вăрмана чĕртес тесе Зинаида Егоровна сахал çынпа вăрçнă-и? Ара, кăшт çитĕннĕ йывăççене касса кайни, çамрăк вăрман çине выльăхсем кĕртсе яни, çакăнтах утă çулни пулас вăрманшăн пысăк хăрушлăх-çке. Кунта И. Илларионова шкула уроксене кайсан, Зинаида Егоровна хăй пĕччен сахал йывăç лартнă-ши тата!

Паян çав вырăнта çамрăк вăрман кашлать. Кашлать те хăйĕн хресна амăшне Зинаида Егоровнана хăйне сыхлама чĕнет. Пăрăнмасть çак ĕçрен те çут çанталăк тусĕ.

Кăçал çуркунне пушар хăрушлăхлĕ тапхăрта шкул ачисем лартнă çамрăк вăрмана "хĕрлĕ автан" кĕрсе кайнине курсан, Зинаида Егоровна малтан пĕччченех вăрман хӳтлĕхне тăрать, анчах вăйсем тан мар... Курăк тăрăх кайнă çулăм пĕчĕк вăрмана кĕл турĕ, анчах пушар машинисем çитни инкеке сарăлма памарĕ. "Çывăхра выльăх ферми те пулни хăрушлăха ӳстерчĕ кăна", – аса илет çав вăхăта З.Ягунова.

– Юратнă йывăç пур-и? – ыйтатăп çут çанталăк тусĕнчен.

– Кашни йывăç паха. Вĕсем сывлăша уçăлтарни, тавралăха эрозирен хӳтĕлени пĕтĕм чĕрĕ тĕнчешĕн пĕлтерĕшлĕ. Çакна ăнланса кашни çыннăн çуркунне-кĕркунне ытларах йывăççем лартасчĕ. Тăван тавралăх йывăçпа пуян пулсан, халăхсем хушшинчи усал шухăш та пĕтĕччĕ, – тет яланах ыррине шанакан Зинаида Егоровна хăйне ытларах хурăн килĕшнине палăртса.

Кăпас тĕлĕнче автоçул икенĕпе 2-шер çухрăм тăсăлакан посадкăна паян ку тăрăхра Зина аппа вăрманĕ теççĕ, унта çырла-кăмпа татма çӳренĕ май хăйсем малтанхи вăхăтра Зина аппа пуçарăвĕнчен кулнинчен именсе.

Хăй лартнă вăрман кăмпапа пуян пултăр тесе З. Ягунова пĕрре мар аякри вăрмансенчен çĕрнĕ кăмпасене çĕрĕпе пĕрле пуçтарса килсе хăй вăрманне лартнă, кăмпа çулне тунă, хурăн çырлисем куçарса вăрманта çырласем ĕрчетнĕ... Çак тăрăшулăхшăн паян çынсем тав тунинчен пахараххи мĕн пур ĕнтĕ!

– Манăн икĕ ывăл та пĕлтĕр хам мăнуксене çав çырла вырăнĕсене илсе кайрăм. Савăнчĕç вара ачасем! Вĕсене кура хамăн та чун хĕпĕртерĕ, – каласа памалли чылай пулнине пытармасăр калаçать ветеран.

Ĕçлеме пĕлекен çын валли халĕ меллĕ пурăнăç. Çакна ăнланнă Зинаида Егоровна килте те пуян сад йĕркелесе çитернĕ. Садри 30 улмуççие, 3 тĕслĕ хăмла çырлине, 3 тĕслĕ сливăна, 3 тĕслĕ чие çырлипе груша йывăççисене такам та ырăпа ăмсанмалла. Вăрман тусĕ пахчара та вăрман пиркиех шухăшлать: кунти вуншар-çĕршер хунава вăл вăрмана кайса лартать. Кайран вара....

– Пĕлтĕр вăрмана кайсан хурăнлăхра хĕп-хĕрлĕ чие çырлин йывăçне тĕл пултăм. Никам та татман, кайăксем те тĕкĕнмен. Тĕлĕнсе кайрăм. Икĕ кун татрăм тупăннă çырлана, татрăм та яла кайса ачасене çитертĕм, – хăй ĕçĕнчен те тĕлĕнмеллисем тупăнни çинчен каласа пачĕ Зинаида Ягунова кусĕсене кĕрхи вăрман çинчен илмесĕр çу кунĕсенче çулленех икшер эрне вăрман тăрăхĕсенчи хыт хурапа пĕччченех кĕрешнине те пĕлтерсе.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Ырă çын ячĕ халăхра юлать**

## Палăрăмлă та чыслă пурнăç

70 çул камшăн мĕнле пулĕ, кам ăна епле хаклĕ – кашни çынран хăйĕнчен килет. Пур енчен те çителĕклĕ пурăнакан ашшĕамăшĕн ачисемшĕн, енчен те вĕсем хуйхă-суйхăсăр выляса-кулса тата ашкăнса ӳсеççĕ кăна пулсан, асăннă вăхăт чăрт! сурмалăх кăна. Ачалăхра выçă ларнă тата япăх çи-пуçпа çӳренисемшĕн тӳрĕ çултан пăрăнасси, çын пурлăхне хапсăнасси пуçра та çуккисемшĕн çак тапхăр вăл пысăк вăхăт.

1936 çулхи çĕртме уйăхĕн 18 кунĕнче 1-мĕш Май выççăлккинче Михепер мăшăрĕ Марфа çуратнă ачине халаллатăп çак тĕрленчĕке.

Нумай хресчен çемйинчи пекех Михеверпе Марфа çуллахи йывăр та пысăк калăпăшлă ĕçсем пуçланиччен ача çуралнишĕн савăннă. "Ку ачана Анук тейĕпĕр,– пĕлтернĕ савăнăçне пытараймасăр тин кăна çăмăлланнă мăшăрне Михевер.– Сана валли ĕмĕр вĕçне çитиччен пулăшса пыракан пулĕ". Савăнăç савăнăçпа та, анчах ача сывлăш çавăрса иличченех унăн телей кайăкне ангелĕсем сыхласа хăварайман пулас. Те шăпи çапла пулнă, те Турри çапла çырнă...

Вăхăт малалла иртнĕçемĕн ун утăмĕпе пĕрле тан пырса Анук та ӳсет, пĕрремĕш утăмсем тăвать. Вăл выляса-чупса çӳрени, унăн чĕлхи уçăлса пыни пурне те савăнтарать, малашлăха пăхтарать. Анчах... Хĕрача виçĕ çула çитсен, йывăр чире пула ашшĕ вăхăтсăр çĕре кĕрет. Анук 5 çул тултарсан, çĕршывра 1418 куна тăсăлнă хаяр вăрçă пуçланать. Çакăнтан ачан тертлĕ пурнăçĕ тымарланать. Аппăшĕпе пиччĕшĕ амăшĕпе пĕрле вĕçĕмех колхоз уй-хирне ĕçе çӳренĕрен Анукăн килте пĕччченех амăшĕ мĕн хушнине пурнăçлама тивнĕ. Кунсем иртнĕ те вăрçă мĕн иккенне чухламан хĕрача та пиччĕшне вăрçа ăсатнă чух амăшĕпе аппăшĕпе тата тăванĕсемпе пĕр пулса чарăнмасăр макăрнă. Вăрçă та кун хыççăн кун хыçа юлса пынă. Пирĕн çарсем фашистсене тĕппипех çапса аркатнипе 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче вăрçăна вĕçлесен, пĕтĕм халăхпа пĕрле 9 çулхи Анук та савăннă.

Пурнăç малаллах пырать. Вăрçă салтакĕсем фронтран киле таврăнма пуçласан, Анукăн аппăшĕ Зинăн та çемье çавăрма мăшăр тупăнать. Вăхăт çитсен пиччĕшĕ те салтакран таврăнать. Вăл та хусаххăн нумай çӳремест, хăйне валли хĕр тупса çемье çавăрать те Шупашкарта тĕпленет. Çакăн хыççăн Анук тĕлне ашшĕ каланă сăмахсем çитеççĕ: вăл амăшĕшĕн шанчăклă тĕкĕ пулса тăрать.

Вăхăт шăвать: ир пулать те каç пулать, çул хыççăн çул иртет. Çак юхăра Анна та сисмесĕрех пиççе çитнĕ çырла пек, амăшне питĕ юратнипе нимĕнле йывăр ĕçрен те хăраман, нимĕнле ĕçе те тиркемен, нумай качча илĕртекен хĕр пулса тăрать. Çемье çавăрма та вăхăт, анчах ют яла качча тухас шут пулман унăн, мĕншĕн тесен хăй çуралса ӳснĕ яла питĕ юратнă вăл тата амăшĕнчен те инçе уйрăлас килмен унăн.

Пĕррехинче амăшĕпе юмахланă вăхăтра Анна хăйне килĕшекен, хăйнешкелех нимĕнле ĕçрен хăраман, анчах тăлăххăн ӳссе çитĕннĕ каччă пирки пĕлтерет. Хĕрĕн шухăшне амăшĕ ырланă кăна. Каччи вара тăлăх Хума Кĕркурин кĕçĕн ывăлĕ Витали пулнă. Кĕçех çĕнĕ çемье чăмăртаннă та çăл куçĕнчен тапса тăракан шыв юххи пек пурнăçри йывăрлăхсене çĕнсе малалла кайнă.

Кунта калаçăва малалла тăснă май вулавçăсене Анна Никифоровнан мăшăрĕн Виталий Григорьевич Фоминăн ашшĕ-амăшĕпе паллаштарам. Ку вăл вулакансемшĕн кăна мар, пĕлĕшĕсемпе ачисемшĕн тата мăнукĕсемшĕн пĕчĕк калав пултăр тетĕп. Виталин амăшĕ Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Малтикасси ялĕнче Варлампий Мартынов çемйинче кун çути курнă, Анна ятпа выляса-кулса ӳссе ашшĕ-амăшне савăнтарнă. Вăл çитĕнсе хĕр шутне кĕнĕ вăхăтра вĕсем патне, ялти сăран артельне ĕçе вырнаçнă май, Юнкăпуçĕнчи Пали Якур ывăлĕ Петĕр хваттере вырнаçнă. Анук кусĕсем качча питĕ вăрттăн сăнанă, куна хамран вĕçертес марччĕ-ха тесе сахал мар пуç ватнă. Майĕпен çамрăксем хушшинчи хутшăну йĕркеленсе кайнă, 1927 çулта Анна Юнкăпуçĕнчи Пали Якурĕн кинĕ пулса тăнă, тепĕр çултан вĕсене Юля ятлă мăнук парнеленĕ. Анчах савăнăç нумая пыман: 1930 çулхине йывăр чире пула Юля ашшĕсĕр, Анна упăшкасăр тăрса юлаççĕ.

Çак вăхăтра Юнкă ялĕнчи Хума ывăлĕ Кĕркури çемье çавăрма уявсемпе пасарсенче хĕр шыранă, анчах килĕшекенни пулман. Çак çул çинче вăл Аннапа та тĕл пулнă. Тăлăх арăм хăйĕн ĕçченлĕхĕпе те, сăнĕ-пичĕпе те, пĕвĕ-сийĕпе те арçын кăмăлне кайнă. Çапла вара Анна Кĕркури арăмĕ пулса тăнă. Хавхаланупа тулнă Григорий Фомич 1-мĕш Май выççăлккинче кил-çурт çавăрма çĕр лаптăкĕ илет те унта пӳрт-çурт çĕкленме пуçлать. Кунпа пĕрлех çамрăк мăшăр колхоз ĕçĕнчен те пăрăнмасть. Шăкăл-шăкăл пурнăçа 1936 çулта Григорий, 1938 çулта Алексей, 1940 çулта Виталий ывăлсем пуянлăх кӳреççĕ. 1941 çулта вăрçă пуçлансан Григорий Фомича çара илсен Анна алă çинче виçĕ ывăлпа салтак арăмĕ пулса юлать. 2 хут арăм пулса та телей мĕнне чухласа юлаймарăм тесе Анна сахал куççуль тăкнă-ши? Вăрçă вăл ача вăййи мар: 1942 çул вĕçĕнче яла Григорий Фомич фронтра хыпарсăр çухални пирки пĕлтерӳ çитет. Çак хуйхă чăваш хĕрарăмне çапсах хуçать. Кунĕн-çĕрĕн колхоз ĕçĕнче вăй хунă, килте ачисене тĕрĕстĕкел ӳстерессишĕн тимленĕ хĕрарăм мăшăрне çухатнă хуйхăна сирсе яраймастех: Аслă Çĕнтерӳ умĕн 1945 çулхи майăн 5-мĕшĕнче йывăр чире кайнă хыççăн виçĕ ывăлне тĕпет тăлăха хăварса пурнăçран уйрăлать. Григорий 9 çулта, Алексей 7 çулта, Виталий 5 çулта никам хӳттисĕр тăрса юлаççĕ. Пулса тухнă лару-тăрăва колхоз правленийĕ пăхса тухать. Унта ачасене пăхма, килти мĕн пур выльăха упраса хăварма тĕпет ачасăр хĕрарăма çирĕплетеççĕ. Хайхискерĕн ачасене те пăхмалла, колхоз ĕçне те хутшăнмалла, кил хуçалăха тытса тăмалла. Хĕрарăм Григорийпе Алексее ĕçе илсе çӳренĕ май пĕррехинче киле пĕччен юлнă Виталий хырăм выçнине пула ир суса лартнă сĕте ыйтмасăрах çиет. Çакăншăн вĕсене пăхакан хĕрарăм ачана вăрçса ятласа пĕтермест, пăяв илсе тĕп сакайне йытăна кăкарнă пек кăмака тункатинчен кăкарса хăварса икĕ ачипе хире ĕçлеме каять. Çак истори çиеле тухсан хĕрхеннипе ачасене 2 ачаллă салтак арăмĕ Перасковия Петровна Кожикова хăйĕн ирĕкĕпех усрава илет. Çын япалине хапсăнмасăр, ырă пурнăça шанса, тӳрĕ çултан пăрăнмасăр пурăнма воспитани панă ачасем çĕршыва юрăхлă çынсем пулса ӳсеççĕ.

Çак ачасен ашшĕ 40 çулта хыпарсăр çухалать, амăшĕ те 40 çулта çĕре кĕрет. Вĕсен кĕçĕн ывăлĕ Виталий Аннăпа мăшăрлanса çут тĕнчене ывăлпа хĕр парнелеççĕ. Виталий те 40 çула кĕрсенех мăшăрĕпе икĕ ачине тăлăха хăварса вăхăтсăр вилсе каять. Çапла вара пĕтĕм йывăрлăх Анна Никифоровна çине тиенет. Апла пулин те хастар хĕрарăм колхоз ĕçĕнчен юлмасăр ĕçлет, килти хушма хуçалăха ял çыннисенчен никамран кая мар тирпейлĕ те ăнăçлă тытса пырать. Кунпа пĕрлех ывăлĕпе хĕрне тӳрĕ çултан пăрăнмасăр, çын пурлăхне хапсăнмасăр ĕçлесе пурăнма ăс парса пурнăç çулĕ çине кăларчĕ. Виталий паян Муркашра, Валентина Санкт-Петербургра çемйисемпе пурăнаççĕ, май çитнĕ таран амăшне пулăшма тăрăшаççĕ. Анчах çак пулăшу пĕрле пурăнни мар çав. Ахальтен-и халăхра çапла юрă пур:

Аякри вут çутин мĕн усси,
Алă шăннă вăхăтра
ăшăтаймасан.
Қатари ачаран мĕн усси,
Ăнсăртран чирлесен
ĕçме шыв памасан.

Пурнăçра ырă йĕр хăварнă Анна Никифоровнана вара ачисем манмасса, мăнукĕсем те пăхса чуна савăнтарасса шанас килет.

**Чирлемесĕр нумай пурăнма ырлăх-сывлăх сунса вăрçăпа ĕç ветеранĕсен канашĕн ертӳçи И. ВАСЮХИН.**